Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* | 128 N (4697) | *1998 çулхи ноябрь (чӳк) уйăхĕн 11-мĕшĕ, юнкун* | *Палăртнă хакпа.*

# Ĕçсене пĕтĕмлетнĕ, задачăсем палăртнă

**Нумаях пулмасть Минтимер Шаймиев Президент хуласемпе районсен администраци пуçлăхĕсемпе, министерствăсемпе ведомствăсен ертӳçисемпе, ТР Президенчĕн аппарачĕн, Патшалăх Канашĕн, Министрсен Кабинечĕн яваплă ĕçченĕсемпе канашлу ирттернĕ.**

Республикăн 9 уйăхри экономикăпа социаллă кăтартăвĕсем пирки ТР вице-премьерĕ - экономикăпа промышленность министрĕ Р.Губайдуллин доклад тунă. Кризиса пула республикăра пĕтĕмĕшле продукци кăларасси чакнине палăртнă. Машинăсем ăсталасси ытла та сахалланнă. Нефть, газ, хими комплексĕсенче çеç кăштах ӳсĕм пур. 1999 çулта республикăри экономикăпа социаллă аталану пирки каланă чух вице-премьер кăçалхи шая сыхласа хăварсан питĕ аван пулĕччĕ, тенĕ. Правительство çĕнĕ çул-йĕрсем шырать.

Социаллă ĕç сферинче лайăх еннелле те улшăнусем пур: иртнĕ çулпа танлаштарсан, пĕр çын пуçне тупăш илесси 102 процента çитнĕ, ĕçсĕрлĕх шайĕ чакнă. Юлашки уйăхсенче Правительство тунă йышăнусем хаксене ӳсме паман, республикăри лавккасенче, пасарсенче кирлĕ таварсен шучĕ чухăнланман. Çаплах ĕç укçи парăмĕ чакнă.

Минтимер Шаймиев ĕç-хĕле сӳтсе явнă май Тутарстанри тавар ăсталакансен тимлĕхне рынока çĕнсе илессине Раççейре кăна мар, СНГра та вăйлатма чĕнсе каланă. ТР Президенчĕ нефть, газ, хими комплексĕсенче 1999 çулшăн задачăсем палăртнă. Вĕсене тулли хăватпа ĕçлеттерме тăрăшмалла. Çакă тупăша ӳстерĕ. Вăл предприятисене приватизациленинчен республикăра пысăк пайта çуккине те палăртнă: акцисен хуçисем производствăна нимĕн те хывмаççĕ, хаклă хутсене сутса яма меллĕ вăхăт кĕтеççĕ. Çакнашкал акционерлă предприятисене патшалăх енчен тĕрĕслесе тăмалли пирки асăрхаттарнă. Ку ĕçре ТР Патшалăх Канашĕ те хăйĕн активлăхне ӳстермеллине палăртнă Президент.

Аграрири ĕç-хĕл пирки ТР ял хуçалăхĕпе апат-çимĕç министрĕ В.Васильев доклад тунă. Отрасльте лару-тăру япăх мар: шăрăх пулнине пăхмасăр, тырпул запасĕсем çĕнĕ тухăçчен çитеççĕ. Çăкăрсăр, çăнăхсăр, кĕрпесемсĕр тата пахча-çимĕçсемсĕр юлмĕç тутарстансем. Сăмах тытакан тăпрана минераллă удобренисем кĕртесси пирки пăшăрханать. М.Шаймиев Правительствăна çак тĕлĕшпе дотаци хисепне ӳстерме сĕннĕ.

Республика çăкăрпа, тĕпрен илсен, Арск, Чистай, Алексеевски, Актанăш, Пăва районĕсен шутĕнчен тивĕçтернĕ. Çаксем республика тухăçĕн 56 процентне панине палăртрĕ министр. Анчах выльăх-чĕрлĕх тытассинче те çивĕч ыйтусем çураласçĕ: хăш-пĕр районсенче вĕсен шутне ытла та чакараççĕ. Çак енпе Çĕпрел, Анат Кама, Аксу, Павлă ытти районсем "çылăхлă". "Чĕрĕ" укçапа продукцишĕн татăласси вăй илсе пырать. Енчен те маларах вĕсем сĕт паракан, ăна тирпейлекен заводсем патне пачах та çитеймесчĕç-тĕк, "Ак Барс" банк урлă укçа-тенкĕ ятарлă схемăпа иртме тытăннăранпа çак ыйту татăлнăпа пĕрех. Хусан, Анат Кама, Çырчалли хулисем ялпа "чĕрĕ" укçапа татăлма пуçларĕç.

Президент хуласемпе районсенчен Хусана килекен отчетсенчи сулăх пирки хытă асăрхаттарнă. Елабуга ертӳçисене çивĕч сăмах лекрĕ: тĕрĕсленĕ чух кунти сĕт-çу завочĕ продукцин пысăк пайне республика тулашне ăсатни палăрнă. М.Шаймиев асăрхаттарнă тăрăх кирек епле пулсан та, çу хисепне çывăх вăхăтрах ăсатнин шайне çитермелле, тенĕ. Унсăрăн Елабуга патшалăх запасĕсенчен çак продукцие илеймест.

Малалла кăçалхи бюджета епле пурнăçлани, 1999 çул бюджетне йĕркелесси пирки ТР финанс министрĕ Р.Мусин доклад тунă. Бюджетăн тупăш пайне 69 процент пурнăçланă. 4 миллиард тенкĕ пухса çитерейменн. Тăкаксен пайне 73 процент пурнăçланă. Палăртнинчен 3,8 миллиард тенкĕлĕх финанслайман.

1999 çул бюджетне йĕркелесси экономика кризисĕн условийĕсенче иртет. Унăн тытăмĕнче малти вырăнта - хамăрăн таварçăсене хавхалантарасси, ĕç, пенси укçисене, ачасен пособийĕсене вăхăтра тӳлесси. Докладра çаплах бюджетăн тупăш пайне епле тултармалли енсене çутатнă.

РФ Пенси фончĕн Тутарстанри уйрăмĕн управляющийĕ А.Шафигуллин пенсисене тӳлес ĕç-пуç пирки каласа панă. Фонда страхланă тӳлевсене парса татманни август-сентябрь уйăхĕсен парăмне 374 миллион, октябре те кĕртсен 600 миллион тенке çитнĕ. Тата малтанхи парăм шучĕ 500 миллионпа танлашать.

Республика пуçлăхĕ пенсисен лару-тăрăвне тишкернĕ май ноябрь уйăхĕнче пенсисене веçех тӳлесе татса малашне кивĕ парăмсене чакарма, парăмсем урăх ан пулччăр тесе задача лартнă.

Канашлăва пĕтĕмлетсе М.Шаймиев Президент промышленноçри йывăрлăхсене пăхмасăр производствăна чакармалла маррине çирĕплетнĕ. Уйрăмах вăл республика халăхне апат-çимĕçпе тивĕçтерессине пысăк тимлĕх уйăрмаллине палăртнă. Хĕле кĕрес умĕн хăш-пĕр районсем услам çу, типĕтнĕ сĕт хатĕрлемелли правительство заданийĕсене пурнăçламанни пирки пăшăрханнă, вĕсене ĕçе кĕртес мерăсене пĕлтернĕ. Çаплах кĕске вăхăтра кайăк-кĕшĕк ашĕн производствине те ӳстермелле. Халăхран ял хуçалăх продукцине сутăн илессине йĕркелени - апат-çимĕç запасĕсене нумайлатмалли тата тепĕр шанчăклă çул.

Президент нумай пулмасть ветерансемпе тĕл пулнă чух наказ илнине те пĕлтернĕ. Халăхăн пурнăçĕ йывăрланнăçем социаллă тĕрĕслĕх ыйтăвĕсем çивĕчленеççĕ, ертӳçĕсем те хăйсен требованийĕсене пысăклатмалла, тенĕ М.Шаймиев.

Канашлăва ТР Премьер-министрĕ Р.Минниханов, ТР Патшалăх Канашĕн Председателĕ Ф.Мухаметшин хутшăннă.

**"Татар-информ".**
**("Сувар" хаçатран).**

...АНОНС

## "Пĕтĕм чунтан"



Ноябрĕн 7-мĕшĕнче Çамрăксен центрĕнче хулапа район администрацийĕн пуçлăхĕ хутшăннипе унăн ылтăн фончĕпе - районти малтанхи ертӳçĕсемпе, активĕпе "Пĕтĕм чунтан" тĕлпулу пулнă.

***Çак мероприяти çинчен хаçатăн çитес номерĕсенчен пĕринче вулăр.***



## Обществăлла центр чĕнсе калать...

Тутарстан республикинчи тутарсен обществăлла центрĕн Çыранçи Чаллăри уйрăмĕ хаçат-журнал çырăнмалли тапхăрта республикăри тата хуласенчи предприятисен, организацисен, учреждениссен, банксен ертӳçисене, тутар-предпринимательсене социаллă хӳтлĕх пайĕсене, хаçат-журнал çырăнтарассине йĕркелекен тата вĕсене саракан агенствăсен ертӳçисене чĕнсе каланă.

Унта, тĕпрен илсен, çак сăмахсем пулнă:

"Эпир пирĕн республикăн пуян предпринимателĕсене тутар периодика изданийĕсене пулăшма ыйтатпăр. Пулăшу тĕрлĕ пулма пултарать. Кашни хаçатăн е журналăн шăпине издани тиражĕ, урăхла каласан, ăна çырăнса илекенсен шучĕ татса парать. Çавăнпа та халăхăн сахал тупăш илекен сийĕсене - пенсионерсене, инвалидсене, ĕçсĕр юлнă çынсене хаçат-журнал çырăнтарса пани чи тупăшлă та ырăмăллă утăм пулнă пулĕччĕ...

Хуласенчи, республикăри предприятисен, организацисемпе учреждениссен, акционер банкĕсен ертӳçисене эпир çапла калатпăр: хăвăр ĕçченĕрсене, сотрудникăрсене пурнăçпа тан пыма, пĕтĕм событисем çинчен пĕлсе тăма пулăшăр, вĕсене хаçат-журнал çырăнтарма май тупма хăвăр мĕн пултарнă таран пулăшăр. Çыранçи Чаллăри обществăлла центр хуласенчи тата республикăри çыхăну узелĕсемпе уйрăмĕсен ĕçченĕсем хушшинче "1999 çула тутар изданийĕсене сарас тĕлĕшпе чи лайăх уйрăм тата чи лайăх почтальон" хисеплĕ ята илессипе конкурс пĕлтеретпĕр. Унăн итогĕсене декабрĕн 15-мĕшĕнче пĕтĕмлетĕпĕр, çĕнтерӳçĕсене хаклă парнесем кĕтеççĕ".

**Центр адресĕ: Çĕнĕ хула, 17/10, Чаллăри Тутар обществăлла центрĕ. Телефон: 52-56-06.**

## Ноябрь уйăхĕнчи "йывăр" кунсем

Ноябрь уйăхĕнче 12,18, 22, 25 тата 28-мĕш числосем хăйсене кăтартĕç. Ноябрĕн 12-мĕшĕнче (13 сехетрен тытăнса 14 сехетчен), ноябрĕн 18-мĕшĕнче (14-16), ноябрĕн 22-мĕшĕнче (15-17), 25-мĕшĕнче (11-13) тата 28-мĕшĕнче (12-14) атмосфера пусăмĕ, геомагнит пăлханăвĕсем, ытти факторсем улшăнĕç. Хăвăрăн, çывăх çыннăрсен сывлăхне упрама тăрăшăр.

### В.В.ИВАНОВ,
### Нурлатри ГРОВД начальникĕ, милици полковникĕ:

# "Милицин пĕр задача: преступлени тăвассине хирĕç кĕрешесси"

Ноябрĕн 10-мĕшĕнче йăлана кĕнĕ тăрăх Раççейри правăпа йĕрке хуралĕсем рабочисемпе хресченсен милицине йĕркеленĕренпе 81 çул çитнине палăртрĕç. Хăй йĕркеленнĕ пĕрремĕш кунсенченех вăл законпа йĕркене пĕр пăркаланмасăр пăхăнассинче, мĕнпур халăхăн тата граждансен харпăрлăхне хуралласинче, законпа çирĕплетнĕ ирĕкпе тивĕçтерессинче патшалăхăн тĕп тĕрекĕ пулса тăнă.

Милиционерсен паянхи ăрăвĕ хăйĕн службин историйĕн чаплă страницисемпе мăнкăмăлланать, аслă юлташсен опытĕнчен чи лайăххине йышăнма тăрăшать, милици ветеранĕсен ырă йăли-йĕркисемпе халалĕсене хушăнтарать, вĕсене уяв ячĕпе саламласа, вăрăм кун-çул сунатпăр.

Ĕлĕкрех граждан, Аслă Отечественнăй вăрçăсен, вăрçă хыççăнхи юхăнчăк тата выçлăх тапхăрĕсем пысăк тĕрĕслев вăхăчĕ пулнă пек, халь те Раççей патшалăхĕн ку чухнехи историйĕнче - çĕнетӳ тата тискер капитализм ура çине тăнă çулсенче милици чи тискер те хаяр преступленисене уçса палăртассине хăй çине илчĕ. Кунта йĕркепе право сыхлавçисене пысăк профессионализм, хăюлăх тата чăтăмлăх кăтартнине палăртмалла: вĕсем закон пĕлтерĕшне сыхласа хăварма, йĕркене пăсассинчи хăрушлăха сирсе яма, юлашки çулсенче вара тĕп ыйтусем тĕлĕшпе криминогенлă лару-тăрăва çирĕплетме пултарчĕç. Криминогенлă лару-тăру çивĕчленнипе хальхи вăхăтра çĕршыври политикăпа экономика лару-тăрăвне, обществăн пурлăхпа социаллă пурнăçĕ япăхланнине шута илсе, милици хăйĕн ĕçне вăйлатассипе витĕмлĕ утăмсем тăвать.



Пирĕншĕн, Тутарстанри йĕркепе право органĕсемшĕн преступлени тăвассине хирĕç кĕрешессипе палăртнă задачăсене ăнăçлă пурнăçлассинче кăçалхи июль уйăхĕнче ТР МВД коллегийĕнче йышăннă ТР МВД органĕсен ĕçне лайăхлатмалли тĕп çул-йĕр концепцийĕ улшăну саманчĕ пулса тăчĕ. Унпа килĕшӳллĕн преступлени тăвассине хирĕç кĕрешесси милицин тĕп задачи пулнă тата пулса тăрать, анчах унăн тĕп çул-йĕрĕсен принциплă уйрăмлăхне паянхи условисене тĕпе хурса палăртнă. Çакă пирĕн ĕç стратегине те, тактикине те вăрах тапхăра палăртма май парать. Вĕсем преступленисем тăвасси ӳснипе кăна мар, тĕрлĕ енлĕ пулнипе те уйрăлса тăраççĕ: наркобизнес активланнăçем активланать; пурлăха вăрласси ӳсет; чи хăрушши вара - преступниксем власть структурисене, хăш-пĕр чухне правăна сыхлакан органсене те хăратасси вăйланни шиклентерет.

Çапах та милици преступление хирĕç кĕрешессине вăйлатма шалти резервсене (штат шутне ӳстерессине) явăçтарассине шанма пултараймасть, юлашки çулсенчи практика кăтартнă тăрăх, вăл хăйне тӳрре те кăларман. Çавăнпа та ку концепцире çак çул-йĕрсем тĕп вырăн йышăнаççĕ: пĕрремĕшĕ - МВД органĕсенче çĕнĕ кадр политики ĕçлесе хатĕрлесси. Çакă, паллах, милици кадрĕсене суйласа илессине, хатĕрлессине, воспитани парассине çирĕплетесси, ку тĕллевпе мораль тата пурлăх енчен хавхалантарасси. Иккĕмĕшĕнчен, управлени тата штатпа йĕркелӳ ĕçне лайăхлатасси. Ку, чи малтан, криминаллă милицин вăйĕсене çĕнĕрен йĕркелессине, ăслă-тăнлă кадрсем суйлассине, пĕртен-пĕр информаципе политика служби тăвассине, ĕлĕкрех йăлана кĕнĕ хаяр операцисене пăрахăçлассине, хутсем çырса аппаланассинчен хăтăлассине пăхса хăварать. Виççĕмĕшĕнчен, йывăр тата уйрăмах йывăр преступленисем ӳснипе çыхăннă преступниксен ушкăнĕсене тытса чарассине тата пĕтерессине милици ĕçĕнче тĕп вырăна хумалла. Тăваттăмĕшĕнчен, милицин мĕнпур службисен, правăна сыхлакан ытти органсен - таможньăн, налук полицийĕн - пĕрле çирĕп çыхăнса ĕçлессине тивĕçтерес задача тăрать. Çак мерăсем милицие преступлени тăвассипе кĕрешессинче çĕнĕ утăм тума, обществăна хăрушсăрлăх тата граждансене лăпкăлăх тивĕçтерме май парасса шанатпăр. Шалти ĕçсен Нурлат хулипе районĕнчи пайне илсен вара - халĕ пирĕн статус улшăнчĕ, - йышăннă концепцие пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе пĕрремĕш утăмсем тунă ĕнтĕ. Ку, чи малтан, кадрсене тивет. Сӳрĕклĕх кăтартнăшăн, служба ыйтнипе килĕшсе тăманшăн 12 сотрудника ĕçрен кăларнă. Çав вăхăтрах шалти улшăнусене пула тĕп службăсене опытлă, тӳрĕ кăмăллă сотрудниксемпе çирĕплетнĕ. Пайăн ĕç пултарулăхĕ палăрмаллах ӳснĕ, çакăн çинчен результатсем пĕлтереççĕ: кăçал регистрациленĕ вĕлернĕ тĕслĕхсене, ирĕксĕрленисене, çаратусене тупса палăртнă. Личнăй состав вăрланă тĕслĕхсене тупса палăртма нумай вăй хурать, вĕсем мĕнпур преступленисен пĕрре виççĕмĕш пайĕ шутланаççĕ.

Çула çитмен ачасем тунă преступленисен шучĕ ӳсни уйрăмах сыхă пулма хистет тата çакă ашшĕ-амăшĕсене пăшăрхантарма тивĕç.

... Çак самантпа усă курса, пире пĕрремĕш кунранах мĕнпур енчен пулăшма тытăннă район администрацийĕн пуçлăхне тав тăвасшăн, пире валли тума тытăннă çĕнĕ çурта çитес çул хута ярасса шанас килет. Хальхи вăхăтра пай сотрудникĕсем ĕç укçи вăхăтлă илеççĕ, çурт-йĕршĕн, газшăн, электроэнергишĕн, коммуналлă услугăсемшĕн тӳлессинче çăмăллăхсемпе усă кураççĕ. Отпуск вăхăтĕнче тӳлевсĕр çӳреме, санаторисемпе курортсенче сипленме пултараççĕ. Пая автомобиль паркĕпе лайăх тивĕçтернĕ, горючи илессине йĕркеленĕ. Акă нумаях пулмасть çĕнĕ обмундировани илтĕмĕр. Çаксем пурте пире малашлăха шанăçпа пăхма тата палăртнă задачăсене пысăк явап туйса пурнăçлама май параççĕ.

Юлашкинчен милици сотрудникĕн чыс кодексне тĕпе хурса, йĕркене сыхлас тĕлĕшпе кăткăс та хăрушă тивĕçне ăста, чĕри хушнă пек пурнăçлакансенчен хăшĕ-пĕрне каласшăн. Кусем, чи малтан, милици подполковникĕ В.Л.Гаврилов ертсе пынипе криминаллă милици. Оперуполномоченнăй И.Н.Чернов, çамрăк оперативниксем Д.Валеевпа И.Гайнутдинов ĕçре уйрăмах пысăк хастарлăх кăтартаççĕ. Экономика преступленийĕсемпе кĕрешессинче милици майорĕ Ю.Е.Кузьмин аван кăтартусем тăвать. Нумаях пулмасть обществăлла хăрушсăрлăх милицине ертсе пыма тытăннă опытлă та принциплă сотрудник милици майорĕ Н.Н.Курбанов, ОПППН службине вара - милици капитанĕ М.М.Зайниев. Çак ретре участоксенчи инспекторсене, майорсене Г.Ю.Чуркина, М.М.Сагирова тата К.Т.Губайдуллина, милици лейтенантне С.А.Боброва, Н.В.Митаков милиционера, вăл кăçал преступниксене преступлени тунă вырăнта темиçе хутчен тытрĕ, çаплах милиционер-водительсене Н.Н.Ульдякова, В.Н.Еремеева, П.И.Васильева, Р.Хусаинова асăнмасăр хăварма çук. Пирĕн хĕрарăм-ĕçченсем те уйрăм мухтава тивĕçлĕ, кусем - аслă дознаватель Р.Р.Кутдусова, ĕçпе юсамалли службăра асли Л.В.Еменькина, паспортпа виза службин аслă инспекторĕ Е.В.Ефремова, аслă следователь Н.Х.Сулейманова, О.В.Купцова, Л.Р.Мустафина следовательсем.

Вĕсем пурте уявра та ĕç вырăнĕнче, канмалли кунсенче те килĕсенче сайра пулаççĕ. Çавăнпа та милицин мĕнпур сотрудникĕсене вĕсен ырми-канми ĕçĕшĕн тав тăвар тата пысăк ăнăçлăхсем, ырлăх-сывлăх, çемйисенче телей сунар.


## Экспресс - центр
### таварсемпе услугăсем сĕнет:

- Компьютерсемпе оргтехника (ксерокссем, факссем тата ытти те)
- ПЭВМ тата оргтехникăн комплектлакан тата тăкаклакан материалĕсем
- вырăнти шутласа кăларакан сетьсене вырнаçтарасси
- компьютерсене тата оргтехника гаранти вăхăтĕнче тата гаранти иртнĕ хыççăн пăхса тăрасси
- ПЭВМ, оргтехника юсасси тата модернизацилесси
- йăла аппаратурине (телевизорсем, аудио - тата видеомагнитофонсем, видеокамерăсем, музыка центрĕсем тата ытти) юсасси
- ксерокопировани (ф.А4) услугисем
- текстлă документсене пуçтарасси тата пичетлесси
- машинăпа ĕçлеме вăхăт парасси (ПЭВМпа ĕçлесси)
- фотопленкăсене проявить тăвасси тата тĕрлĕ тĕслĕ сăнӳкерчĕксем (ф.10х15) пичетлесси
- документсене валли хура-шурă тата тĕрлĕ тĕслĕ сăнӳкерчĕксем самантрах хатĕрлесси (2,5х3,5 тата 3,5х4,5)
- фототоварсем (пленкăсем, батарейкăсем, альбомсем, фотоаппаратсем тата ытти те)
- техника тата илемлĕ литература.

### Договорсем тăватпăр:

*- ПЭВМ техника енчен тивĕçтересси*
*- программа тивĕçтерĕвне пĕрле пурнăçласси*
*- ятарлă программа тивĕçтерĕвне ĕçлесе хатĕрлесе хута ярасси*

**Экспресс-фото клиентсене çакна пĕлтерет: 1998 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕччен тунă сăнӳкерчĕксен заказĕсене 1998 çулхи декабрĕн 1-мĕшĕччен кивĕ хакпа (1 сăнӳкерчĕкшĕн 1 тенкĕ те 50 пус) параççĕ.**

*Республикăри НИОКР фончĕн тĕп предприятийĕ НИОКР ĕçлесе хатĕрлес, хута ярас, илемлетес тĕлĕшпе тĕрлĕ услугăсем парать.*



## Аксеновăн Бизнес Шкулĕн Хусанти филиалĕ вĕрентет:

*- ПЭВМ операторĕсене (Windows, Offisse 97)*
*- BASIC чĕлхипе программăламалли никĕссем*
*- FOXPRO чĕлхипе программăламалли никĕссем*
*- PASCAL чĕлхипе программăламалли никĕссем*
*- акăлчан чĕлхине вĕренесси*

*Адрес: Нурлат хули, Школьная урамĕ, 8, Экспресс-центр, 8 сехетрен пуçласа 18 сехетчен. Апат вăхăчĕ 13 сехетрен пуçласа 14 сехетчен. Телефон: 5-37-51.*

*Уяв юррисем*

## Çĕр каçиччен вылясан

*Урлă-пирлĕ çул килет,*
*Пĕр йўппипе хĕр килет, -*
*Ай, лю-ли, - хĕр килет.*
*Алă тытса чуп тусан,*
*Çамрăксене вăй килет, -*
*Ай, лю-ли, - вăй килет.*

*Çĕр каçиччен вылясан,*
*Яш-кĕрĕме вăй кĕрет.*
*Çамрăк пуçа чармасан,*
*Ваттисене ят тивет.*

*Анкартинчи уткăшкар*
*Ут сывлăшĕпе сархайнă.*
*Ял-ялĕнчи ачисем*
*Чĕлĕм туртса сархайнă.*
*Хамăр ялсен ачисем*
*Чĕлĕм туртса сархайман.*

Пухса йĕркелекенĕ Е.ИЛЮШКИНА.

## Ăстасем сĕнеççĕ

Ыхра тĕпне газ горелки çинче кăштах ĕнтсе илсен, вăл лайăххах упранать.

* * *

Купăстана ахаль майпа упранипе пĕрлех тăм "хупăлчара" та упрама пулать. Купăста пуçĕн çиелти симĕс çулçисене илмелле, тунине шпагат çыхмалла. Хăйма пек çăра тунă тăм ирĕлчĕкĕпе купăста пуçне çулçă курăнми сĕрмелле. Урамра çакса типĕтмелле, ун хыççăн купăста пуçĕсене нўхрепре çакса хумалла.



* * *

Тĕсĕ çухалнă пахча-çимĕçсене сехет-сехет çурă 3-4 апат кашăкĕ чухлĕ уксус хушнă сивĕ шывра тытмалла.

* * *

Пыла алюмини тата кантăк савăтра кăна упрама юрать. Пăхăр, тăхлан тата цинк савăтсем ăна валли юрăхсăр. Пылри органикăллă кислотасем çак металсемпе реакцине кĕрсе наркăмăшлантаракан хутăшсем тăваççĕ.

* * *

Кантăк савăтри пыла тĕттĕм çĕрте упрамалла, унсăрăн вăл хăвăрт тĕксĕмленет.

## Исмагил Исхакович ТУЕШЕВ



1998 çулхи ноябрĕн 5-мĕшĕнче йывăр чирлесе выртнă хыççăн 73 çула кайса Аслă Отечественнăй вăрçа хутшăннă, ĕç ветеранĕ Исмагил Исхакович Туешев вилсе кайнă.

И.И.Туешев 1925 çулхи ноябрĕн 25-мĕшĕнче Тутар АССРĕн Октябрь районĕнчи Кислев ялĕнче çуралнă.

Хăйĕн ĕç çулне вăл 1949 çулта потребительсен кооперацийĕнче Кислеври ялпора сутуçă пулса тытăннă. 1963 çулхи февраль уйăхĕнчен тытăнса тивĕçлĕ канăва тухиччченех районти хатĕрлев кантурĕн директорĕ пулса ĕçленĕ. Çак тивĕçе вăл 22 çул хушши пурнăçласа, хатĕрлев ĕçне аталантарассине пысăк тўпе кĕртнĕ, хăйĕнчен тата хăйне пăхăнса тăракансенчен хытă ыйтнă, хăйĕн ĕçĕнче çынсемшĕн тăрăшассине пĕрремĕш вырăна хунă.

Вăрçа хутшăннă, вăрçă инваличĕ шутланнă пулин те, вăл хăйĕнпе пĕрле ĕçлекенсене иксĕлми вăй-хăват парса тăнă.

Унăн çарти тивĕçĕсене хакласа ăна медальсемпе, II степень Отечественнăй вăрçă орденĕпе наградăланă.

Исмагил Исхакович Туешевăн çутă сăнарĕ унпа пĕрле пурăннисен тата ĕçленисен чĕрисенче яланах упранĕ.

Ф.С.СИБАГАТУЛЛИН, Ю.В.ТЕРЕНТЬЕВ, Ф.М.ДАВЛЕТШИН, А.Н.ЕЛЬЧЕНКОВ, Ф.Р.НОГУМАНОВА, Ф.Н.ГУБАЙДУЛЛИН, Н.Б.МУЛЮКОВ, Н.Х.АБДУЛЛИН, Ю.А.МУРАКАЕВ, М.С.МУРАТОВ, С.С.ИДИАТУЛЛИН, И.У.ГИЛЯЗЕВ.

*Криминисторисем*

# Çын пурнăçĕ ниме те тăмасть

Октябрĕн 31-мĕшĕнче ирхине Мамăк ялĕнче Чиешнери лесничествăн кивĕ кантурĕ патĕнче кăкăрне, хырăмне, мăйне чиксе суранласа пĕтернĕ арçын виллине тупнă. Вăл II ушкăнри инвалид, вăтăр иккĕри Виталий Марфуткин пулнă. Яла оперативлă следстви ушкăнĕ çитнĕ. 16 сехет тĕлне преступление тупса палăртнă.

...Çакă каçхине А. çуртĕнче пуçланнă. Черкке хыççăн черкке, сăмах хыççăн сăмах, часах хĕрсе çитнĕ хуçа хăнана ĕлĕкхи кўренўсене аса илтернĕ, йывăр турчка ярса тытнă. Марфуткин тумланмасăрах тухса тарнă, анчах А. ăна пĕр 100 метртанах хуса çитнĕ, çĕçĕпе чиксе пĕтернĕ, лешĕ вырăнтах вилсе кайнă. А.çавăнтах килне таврăннă та преступлени йĕрĕсене пĕтерме хăтланнă: çĕççине, вилнин аттипе телогрейкине пытарнă. Хăй нўхрепе пытаннă, анчах нумай вăхăта мар - ГРОВД сотрудникĕсем ăна çавăнтах тупнă.

P.S. Çакăн пек преступленисем пирĕн пурнăçра сайра мар. Эрехлĕ кĕреке хушшинчи уяв сывлăхшăн пуçланать, анчах салху вĕçленет. Çак мăшăр ăçтан укçа тупнă-ши? А. ашшĕ-амăшĕ чылай кĕтнĕ пенсие илнĕ, çак пулăма мĕнле палăртмалла марха? Çак криминаллă истори нумаях пулмасть редакцие шăнкăравланине аса илтерчĕ. Пенсионер чунне уçса ўпкелешрĕ, ывăлне кирлĕ пек кĕтсе илме хатĕрленеймест иккен: карточкăпа эрех памаççĕ, унсăр вара уяв та савăнăçлă мар. Апла пулсан, тен, эпир çав ылханлă шĕвексĕрех аптрамăпăр?

Т.АЛЕКСЕЕВА.

## Пĕлтерўсем

**Сутатпăр:**

Хутса ăшăтмалли комбинациленĕ газ кăмаки. Ыйтса пĕлмелли телефон: 5-13-78.

* * *

Çурçĕр-Хĕвелтухăç микрорайонĕнче çурт валли участок,васкавлă. Адрес: Козлов урамĕ, 16-1, телефон: 5-23-20.

* * *

Апат-çимĕç пасарĕ патĕнчи 3 пўлĕмлĕ хваттер. Телефон: 2-26-64.

* * *

3 пўлĕмлĕ хваттер. Адрес: Дружба урамĕ, 74-24, 17 сехет хыççăн шăнкăравламалла.



*С.Майстер сăнўкерчĕкĕ.*

## Тĕнчери чи...чи...

Кăйкăр, сывлăшран çĕрелле 45 градус майлă "ўкнĕ" - аннă чухне пĕр сехетре 350 километр хăвăртлăхпа вĕçет. Африка леопарчĕ - 100, антилопа - 90 километр чупать. Шывра пурăнакансенчен Лăпкă океанри дельфин пĕр сехетре 55,5 километр хăвăртлăхпа ишме пултарать.

* * *

Чи хуллен çўрекенни Америкăри тропик вăрманĕнчи ленивец. Наян-кахал çак чĕр чун, урисемпе йывăçран çакăнса пурăнаканскер, минутра икĕ метр е сехетре 0,12 километр çеç куçать.

* * *

Çури - чĕппине сĕтпе ўстерекен чĕр чунран чи пысăкки - кашалот-кит. 1950 çулта Курил утравĕсен таврашĕнче тытнă çав кит тăршшĕ 20,7 метр пулнă. 1974 çулта "Слава" флотилин карапĕ çинчи кит тытакансем 27,6 метр тăршшĕ чĕр чуна туртса кăларнă. Вăл 180 тонна тайнă. Чи çўллĕ чĕр чун вара - Африкăри жираф - 7 метр.

* * *

Сĕтлĕ чĕр чунран чи пĕчĕкки - Тайваньри çара çерçи. Вăл 1,75 грамран пуçласа 2 грама çити çеç таять, çунаттисен сарлакăшĕ - 160 мм. Тĕрлĕ ўсен-тăран çимĕçĕпе тăранса пурăнакан чи пĕчĕк чĕрчун - Çĕпĕр юсĕ. Унăн тăршшĕ - 200 мм, йывăрăшĕ - 35-70 грамм.

* * *

Чи çўллĕ вырăнта пурăнакан чĕр чун - Тибет якĕ. Ватăлнă май вăл тинĕс шайĕнчен 6000 пин метр ытла çўллĕшне хăпарать. Пралукпа çыхланнă, 1134 метр тарăнăшне аннă кашалот-кита Таса Елена утравĕ таврашĕнче курнă. 1969 çулта вара шыв тĕпĕнче çеç пурăнакан икĕ акулăна çăтса янă кашалот-кита тытнă. Çав тăрăхра океан тарăнăшĕ 3000 метр пулнă. Апат шыраса çавăнта çитиччен аннă ĕнтĕ вăл.

## Ноябрĕн 13-мĕшĕнче районти культура çуртĕнче Красноярск циркĕ çĕнĕ программăпа!




*10.00, 14.00, 18.00 сехетсенче.*

*Билет хакĕ 15 тенкĕ.*

*Программăра: тĕве, упа, удав, упăтесем, варан, чăхăсем, йĕкехўресем. Цирк артисчĕсем хутшăнаççĕ.*

*Коллектив заявкисем валли телефон: 2-16-55. Билетсем тăрăх лоторея вылявĕ irттереççĕ.*

**Ырă сунса кĕтетпĕр!**

## Пĕлтерўсем

Тĕслĕ металл каяшĕ туянатпăр: пăхăр -1 килограмĕ 8 тенкĕ, йĕс, бронза - 3 тенкĕ, алюмини - 2 тенкĕрен тытăнса 5 тенкĕ таран. Адрес: Советская урамĕ, "Татсельхозмонтаж" бази. Лицензи А 0204 номерлĕ.

* * *

Заводри оборудованипе урапасем шиплаççĕ. Гаранти, пахалăх. Телефон: 5-35-91. Лицензи Б-97 сериллĕ, 288882N.

Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.
Редактор Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тухать, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 893. 4337